2023-2024-мĕш вĕренӳ çулĕ
Шкул шайĕнчи олимпиада
Чăваш чĕлхипе литератури (Чăваш шкулĕ)
7 класс
Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вăхăт – 120 минут
Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумайĳи 50 балл пухма пулать

1. Нумай пăнчă вырăнне панă сăмахсене тĕрĕс вырнаçтарса лартăр: *ылтăн, ăс, суйи, хисеп*. Кашни йăнăшшăн 1 балл чакармалла . Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.
а.Сӳс тӳме кисĕп кирлĕ, калаçма … кирлĕ.
ă.Чăн сăмахăн … çук.
б.Каланă сăмах – кĕмĕл, каламанни - … .
в. Ача-пăчана ашшĕ-амăшĕ мул париччен … пама кирлĕ.

2. Йăнăшсене тӳрлетĕр: *Курăк çийетĕп – шăлăм мăкалат, хăйăр çийетĕп – калех çивĕчленеть.*Тупмалли юмахăн тупсăмне тупăр. Кашни йăнăшшăн 1 балл чакармалла. Пурĕ – 5 балл.

3. *Володя шанк хытрĕ, пĕр хушă ним хускалмасăр тăчĕ. Чĕри кăкăрĕнчен сиксе тухас пек тапма тытăнчĕ.* Фразеологизмсене тупăр та мĕне пĕлтернине ăнлантарăр. Пурĕ – 6 балл.

4. *Инке манпа сăмах пуçласшăн, анчах та такама хушаматпа чĕнни илтĕнет, пурте шăп тăраççĕ.* Местоименисене тупăр та хăш ушкăна кĕнине çырса парăр. Пурĕ – 6 балл.

5. Предложенисен чиккисене тупăр та чарăну палли лартса çырса илĕр. Текстри сас паллипе сасăсен шучĕ тӳр килмен сăмахсене йĕр туртса паллă тăвăр.
«*Анчах ку çуна тинех ярăнма юрăхлă пулас çук ĕнтĕ ăна эпир лаççа кĕртсе хурăпăр вăл пирĕн ваттисене турттарса леçмелли çунашка пулĕ аннепе эсĕ ватăлсан та сире çак çунашка çине лартса хам килсе пăрахăп». ( Г.Волков çырнинчен).* Тĕрĕс çырнăшăн – 2 балл, сăмахсене тупнăшăн – 4 балл. Пĕтĕмпе – 6 балл.

6. *«Хĕн-хур айĕнче» поэмăри авалхи чăваш ячĕсене çырса парăр.Поэмăна кам çырнă?* Ятсене çырнăшăн пĕтĕмпе 5 балл илсе пулать. Авторне палăртнăшăн – 2 балл. Пурĕ – 7 балл.

7. «Чăваш поэзин чăн тӳпинче икĕ çутăран та çутă çăлтăр ялтăртатать: пĕри – Иванов, тепри – Çеçпĕл». Çак сăмахсене калаканĕ кам? Тĕрĕс хуравшăн– 4 балл.

8. Геннадий Айхин Вера Кузьминана халалланă сăвви мĕн ятлă? Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.

9. Çурхи уйăх ячĕсене çырăр. Тĕрĕс хуравшăн – 3 балл.

10. Çĕр ĕçĕпе çыхăннă, хăвăра килĕшекен професси çинчен çырса парăр. Тулли хуравшăн – 5 балл.